26-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943
АВГУСТ
15
ВЫРСАРНИКУН
163(6400) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН
ХАÇАЧĚ

Вырнă тырра çийěнчех капана хывмалла

Совет Информаци Бюровěн паян пичетленекен оперативнăй сводкинче совет халăхě хăйěн паттăр Хěрлě Çарě тата тегěр пысăк çěнтерÿ тунине курать. Пирěн войскăсем, ирсěр нимěçсене тата тепěр çěртен вăйлăн пырса çапса, Спас-Деменск хулине йышăнса илчěç. Çитě вăхăт, пирěн çěр çинче пěр чěрě нимěç те юлмě!

Пирěн çěршывăн тылěнче те халě хěрÿллě кěрешÿ пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпула йнăçлăн пухса кěртессишěн кěрешеççě. Уборка вăл—фронтри çапăçупа пěрех. Çак çапăçура та пирěн пысăк çěнтерÿ тумалла, ылттăн тырпула пěр пучах юлмиччен хиртен пуçтарса кěртмелле.

Юлашки вăхăтра çăмăр çусах тăни уборка ěçěсене йывăрлатрě. Анчах пирěн боецсем çанталăк кансěрленине чăтăмлăн тÿссе ирттереççě, хăйсен аслă тивěçне çÿлте тытса, нимěç захватчикěсене кунěн-çěрěн Хěвеланăçнелле хăвалаççě. Колхозри ěçре те чарăну пулмалла мар. Тырпулсене пухса кěртес ěç кирек мěнле пулсан та кунран-кун вăйланса пымалла. Йывăрлăхсене хăвăрт та ăнăçлăн çěнтермелле. Ěçре кашни руководитель, кашни колхозник çавăрăнăçуллă пулмалла.

Малта пыракансен ěç опычě çакна кăтартса парать: уборкăри пур тěрлě ěçсене те лайăх тата вăхăтра организацилесе пырсан çеç тырпула тăккаламасăр пухса кěртме пулать. Калас пулать, пирěн республикăри чылай колхозсен руководителěсем çакна тěплěн ăнланса илнě. Вăрнар районěнчи коммунистсемпе комсомолецсем уборка ěçěсене ăнăçлăн вěçлеме, государствăна тырпул памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлама районри мěнпур ěççыннисене активлăн мобилизацилерěç. Вăрнар районěнчи колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене чи кěске срокра пухса кěртессишěн, государствăна тырпул памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлассишěн, çак ěçсене ăнăçлăн пурнăçлани çинчен Сталин юлташа чи малтан рапорт парассишěн республикăра социализмлă ăмăрту пуçарса ячěç.

Республикăн чыспе çÿлте тытас тесе, Вăрнар районěнчи колхозниксен паха пуçарăвне кашни колхозрах сарса пымалла, кашни колхозник уборка ěçěнчи социализмлă ăмăртăвăн активлă участникě пулмалла.

Лайăх ěçлекен колхозсем уборкăн малтанхи кунěсенчен пуçласах кěлтесене уйран итемсем çине кěртсе капана хывма, тырра вырнăçеменех çапса пыма тăрăшаççě.

Шăмăршă районě августăн 10-мěшě тěлне 7722 гектар тырă вырнă, ку вăл планăн 52 проценчě пулать. Çак вăхăтрах 2460 гектар çинчи тырра итемсене турттарса капана хывса хунă. Ку вăл вырнă тырран 31,8 проценчě пулать. «Победа» колхоз 344 гектар çинчен вырса пухнă тырра çийěнчех капана хывнă. Кунта пěтěм тырă капанра. Колхозри агитколлектив, унăн руководителě Николаева юлташ çак ěçе аван ертсе пынă. Ялти пěтěм актив ěç вěçленнě хыççăн татах уя тухса, кěлтесене капана хывас ěçре тимлěн ěçленě. Кěлтесене алвěççěн те çěклене, урапасемпе те турттарнă.

Улатăр районě, пěтěмěшпе илсен, юлса пырать. Анчах вырнă тырра капана хывас ěç кунта начар мар. Августăн 10-мěшě тěлне район вырнă тыррăн 47,5 процентне капана хывнă. Урăхла каласан, Улатăр районěнчи колхозсем вырнă тырра çийěнчех капана хывса пыраççě.

Анчах кěлтесене капана хывас тěлěшпе республикăри хăшпěр колхозсен руководителěсем ответлăха туймаççě-ха.

Шăхасан районěнчи «Молодой колхозник» колхозра жнейкăпа августăн 10-мěшěнче вырнă тыра çыхмасăр икě талăк хушши выртнă. Çăмăрпа йěпенсе шăтса кайнă. Çакăн пек фактсем ытти хăшпěр колхозсенче те пур.

Кěлтесене капана хывас ěçе вăйлатас пулать. Вырнă тырра çийěнчех çěмеле е капана хывас пулать. Çапла тусан çеç эпир тырпула йěпенсе пăсăласран сыхласа хăвармa пултаратпăр.

Совет Информаци Бюровěнчен

АВГУСТĂН 13-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Çак кунсенче пирěн СПАС—ДЕМЕНСК хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăр-хěвелтухăçнерехре тăракан войскăсем нимěçсен фашистла войскисене хирěç наступлени пуçласа янă. Наступлени икě енчен пуçланнă: СПАС-ДЕМЕНСКРАН çурçěр-хěвеланăçнерехри районран кăнтăралла тата СПАС—ДЕМЕНСКРАН кăнтăр-хěвелтухăçнерехри районран—çурçěр-хěвеланăçнелле.

Пирěн СПАС-ДЕМЕНСКРАН çурçěр-хěвеланăçнерехри районран тапăнса пыракан войскăсем тăшманăн вăйлă çирěплетнě оборонине фронт тăршшěпе 35 километр сарлакěш татса кěнě, нимěçсем хаяррăн хирěç тăнине çěнтерсе пырса, 20 километр малалла куçнă.

Пирěн СПАС-ДЕМЕНСКРАН кăнтăр-хěвелтухăçнерехри районран тапăнса пыракан войскăсем тăшманăн вăйлă çирěплетнě оборонине фронт тăршшěпе 15 километр сарлакěш татса кěнě, 17 километр малалла куçнă.

Вицě кун хушши пынă хěрÿллě çапăçусенче пирěн войскăсем халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнě. Вăл шутра СПАС-ДЕМЕНСК хулине, КУЗЕМКА, БАХМУТОВО, БЕЛЬНЯ, ДУБРОВО, ОБОЛОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене, ЗАНОЗНАЯ ятлă чугунçул узелне тата ПАВЛИНОВО, ГРИВКА, ЧИПЛЯЕВО, БОРЕЦ, ШАЙКОВКА чугунçул станцийěсене илнě.

БРЯНСК енче пирěн войскăсем çаплах малалла тапăнса пына, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăнса илнě. Вăл шутра ШАБЛЫКИНО район центрне тата халăх пурăнакан АКСИНИНО (Карачев хулинчен 6 километр хěвелтухăçнерехре), НАТАЛЬИНО, НАВЛЯ, ВОРОНЦОВО, ГЕРАСИМОВО, КУЧЕРЯЕВКА ятлă пысăк пунктсене илнě.

ХАРЬКОВ енче пирěн войскăсем, тăшман хирěç тăнине тата унăн контратакисене çěнтерсе, малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнě. Вăл шутра ДЕРГАЧИ район центрне тата халăх пурăнакан пысăк пунктсене—ЧЕРКАССКОЕ ЛОЗОВОЕ, МĂН ДАНИЛОВКА (Харьковран километр çурă çурçěр-хěвелтухăçнерехре), РОГАНЬ, НОВО-ПОКРОВСКОЕ ятлă пунктсене, çавăн пекех тата ДЕРГАЧИ, ЛОСЕВО, РОГАНЬ, МОХНАЧ чугунçул станцийěсене илнě.

Ытти фронтсенче пирěн войскăсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирěç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 12-мěшěнче пирěн войскăсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 46 танкне персе çěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 73 самолетне ÿкернě.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирěн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Пирěн войскăсем, малалла куçса, Карачев хули çине тапăнса пынă. Тăшман хирěç тăрса çапăçать, анчах та совет пехотинецěсем, танкисчěсем, артиллерисчěсем тата летчикěсем пыра-пыра çапнипе, пěр тěреклетнě пункт хыççăн тепěр тěреклетнě пунктран тухса каялла чакать. Кун каçиччен пулса иртнě çапăçусенче халăх пурăнакан 20 пункта ытла, вăл шутра Шаблыкино район центрне (Карачевран кăнтăр-хěвелтухăçнерехре) йышăнса илнě. Халăх пурăнакан çав пунктсемшěн пынă çапăçусенче нимěçсен 2.000 салтакěпе офицерне çити вěлернě, 10 танк тата 18 тупă пěтерсе тăкнă. Тăшманран 25 танк, 13 тупă, 8 миномет, 45 пулемет, тěрлěрен çар грузě тиенě 150 автомашинăпа лав тытса илнě. Тыткăна илнисем пур. Тăшман йывăр çухатусем тÿсет. Тыткăна лекнě нимěçсем çапла пěлтереççě. Нимěçсен 8-мěш танковăй дивизийěнчи 28-мěш мотополка çапăçусем вăхăчěсенче темиçе хутчен те çěнěрен вăй хушса панă, çапах та полкра 300 çын таран анчах тăрса юлнă. Халě вăл полкран батальон туса хунă. Нимěçсен 25-мěш моторизованнăй дивизийěнчи 35-мěш полкран тыткăна илнě салтаксем те çавнах калаççě. Вěсем каланă тăрăх, вăл полкра мěнпурě те 120 салтакпа офицер кăна тăрса юлнă.

Дмитровск—Орловски хулине тытса илнě хыççăн пирěн войскăсем малалла тапăнса пынă. Халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнě. Пěр соединени тăшмана хěвеланăçнелле ыватса янă та 1.060 гитлеровеца пěтерсе тăкнă, нимěçсенчен 4 танк, 16 тупă, 230 пулемет, 19 миномет, 800 автоматпа винтовка тата боеприпассен темиçе складне тытса илнě.

Халăх пурăнакан пěр пункт районěнче пирěн боецсем советсен мирлě гражданěсене 1000 çынна ирěке кăларнă. Вěсене нимěçсем вăйпа хěвеланăçнелле хăваласа пынă.

* * *

Харьков енче пирěн войскăсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă.

Харьковран çурçěр-хěвеланăçнерехре тата хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем, нимěçсем хаяррăн хирěç тăнине çěнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнě. Ахтырка районěнче тăшман танкěсемпе мотопехоти хаяр контратака тунă. Нумай сехет хушши пынă çапăçура совет чаçěсем нимěçсене пысăк çухатусем кÿнě, гитлеровецсен каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн темиçе çěр вилли тата персе çěмěрнě 26 танкě выртса юлнă. Тепěр участокра нимěçсем пирěн чаçсем малалла куçса пынине контратакăсем туса чарма хăтланнă. Пěр соединени боецěсем 3 кун хушшинче тăшманăн 4000 салтакěпе офицерне çити пěтерсе тăкнă. Тăшманран 12 танк, 67 тупă, 347 пулемет, 70 миномет, 30 радиостанци, 100 километра çити телефон кабельне, тěрлěрен 8 склад тата ытти трофейăсем те тытса илнě. Чылай гитлеровеца тыткăна илнě.

Харьковран çурçěртерехре тата хěвелтухăçнерехре пирěн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан чылай пунктсене, вěсен шутěнче Дергачи район центрěпе чугунçул станцине, йышăнса илнě.

Пěр соединени боецěсем Харьковран километр çурă çурçěр-хěвелтухăçнерехри Мăн Даниловка ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнě. Харьковран кăнтăр-хěвелтухăçнерехре пěр соединенин танкисчěсем тăшман çине çěмěрсе кěрсе кайнă та, çав тери хăвăрт пырса çапса, Рогань, Лосево, Мохнач чугунçул станцийěсене йышăнса илнě. Пирěн войскăсен наступленине чарма хăтланса, тăшман питě хаяррăн хирěç тăрать. Анчах та нимěçсем тăрăшнисем пурте харама кайса пыраççě, вěсем нимěç войскисем Харьков патěнчи çапăçусенче тÿсекен унсăр та пысăк сухатусене кăна ÿстерсе пыраççě.

* * *

Пирěн Спас-Деменск хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăр-хěвелтухăçнерехре тăракан войскăсем çак кунсенче наступлени пуçласа янă. Тăшман позицийěсем çине хăватлăн персе тăнă хыççăн совет боецěсем нимěçсене атакăланă та тăшманăн вăйлă çирěплетнě оборонине татса кěрсе кайнă. Малалла тапăнса пырса, пирěн войскăсем халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнě. Паян хаяр çапăçусем хыççăн пěр соединени чаçěсем Спас-Деменск хулине йышăнса илнě. Хулашăн пынă çапăçусенче 2.000 гитлеровеца ытла пěтерсе тăкнă тата 130 нимěçе тыткăна илнě. Тăшманăн 11 танкне персе çěмěрнě е çунтарса янă. Соединени боецěсем нимěçсенчен 16 тупă, 65 пулемет, 22 миномет, 3 радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнě.

Пирěн авиаци малалла тапăнса пыракан чаçсене активлăн пулăшса тăрать, тăшман войскисене пыра-пыра çапать. Сывлăшри çапăçусенче пирěн летчиксем нимěçсен 42 самолетне персе ÿкернě.

* * *

Ленинград фронтěнче пирěн подразделенисем гитлеровецсене пěр батальона çити пěтерсе тăкнă. Артиллерирен тата минометсемпе персе, тăшманăн 60 дзотне, 9 наблюдательнăй пунктне тата 40 землянкине ыйсе антарнă е сиенленě, артиллерин 20 батарейине çити тата боеприпассен 6 складне пěтерсе тăкнă.

Ленинград патěнче пулса иртнě сывлăшри çапăçусенче пирěн летчиксем нимěçсен 6 самолетне персе ÿкернě.

* * *

Каменец-Подольск облаçěнчи районсенче кěрешекен партизансен тăватă отрячě пěр уйăх хушшинче тăшманăн хěçпăшал, боеприпассем тата çарсем илсе пыракан 29 эшелонне ÿпěнтерсе янă. Çав крушенисенче 26 паровоз, 376 вагонпа платформа сиенленнě е çěмěрěлнě. Августăн 1-мěшěнче «Тăван çěршывшăн!» ятлă отрядри партизансен ушкăнě пěр пысăк яла сасартăк вăрканса кěрсе кайнă та нимěçсен 30 жандармне пěтерсе тăкнă, телефон станцине çěмěрнě, нефть складне çунтарса янă, 90 тоннăна яхăн горючи пěтнě.

Крымри партизансем июль уйăхěн вěçěнче нимěçсен пысăк карательнăй отрячěпе çапăçнă. Партизансем пěчěк ушкăнсене пайланса кěрешнě. Вěсем çав çапăçусенче нимěçсен фашистла оккупанчěсене 200 сынна ытла пěтерсе тăкнă.

Социализмлă ăмăртăвăн татăклă тапхăрěнче кам мала тухě?

Вăрнар районěнчи колхозниксен чěнěвне хапăл туса йышăнаççě

ВАРМАР. Августăн 14-мěшě. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем Вăрнар районěнчи колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене чи кěске срокра тата пěр тăккаламасăр пухса кěртме тата государствăна ялхуçалăх продукчěсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлама чěнсе каланине хапăл туса йышăнчěç. Халě кашни колхозрах çак чěнěве пысăк çěкленÿпе сÿтсе-явса, колхозниксем хăйсем çине çěнě обязательствăсем илеççě.

«Арапуç» колхоз членěсем, илнě обязательствăсене чыслăн пурнăçлас тесе, уйхире ěçлеме ирхине 5 сехетре тухаççě те çěрле 10 сехетре тин таврăнаççě. Ку колхоз октябрěн 10-мěшě тěлне государствăна ялхуçалăх продукчěсем памалли обязательствăсене парса татма пулчě. 1-мěш бригадăн бригадирě Романов юлташ уйри пур тырпулсене те августăн 17-мěшě тěлне вырса пěтерме обязательство илчě. Унăн примерěпе ытти бригадирсем те тырпулсене кěске срокра пěр тăккаламасăр пухса кěртессишěн кěрешеççě.

Пур бригадăсенче те агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантару ěçне витěмлě туса пыраççě. Агитатор А. Степанова юлташ ăнлантару ěçне тăтăшах туса пынипе пěрлех ěç нормине 200 процент тултарса пырать. Çавăн пекех «15 съезд ВКП(б)», «Свобода», Вăрмарти «Большевик», «Маяк» колхозсенче те Вăрнар районěнчи колхозниксен чěнěвне пысăк активлăхпа сÿтсе-явса, хăйсем çине илнě обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишěн социализмлă ăмăртăва вăйлăн сарса ячěç.

И. СТЕПАНОВ.

Уборка ěçне вăраха ямалла мар

КАНАШ. (Хамăр корр.). „Красный путиловец" колхоз районри колхозсенчен пур ěçпе те кая юлса пырать. 1943 çулта кунта 4 председатель улăштарса лартнă ěнтě. Юлашки вăхăтра ку колхозра коммунист Мухин юлташ председатель пулса ěçлет. Колхозăн планпа 280 гектар кěрхи тырă пухса кěртмелле. Августăн 11-мěшě тěлне 170 гектар кăна вырнă. Авăн çапма тытăнман та-ха.

Мěншěн колхоз уборкăра юлса пырать-ха? Тěп сăлтав кунта—ěç дисциплини çирěп марринче. Колхозра ěçлеме пултаракансем çěр çын ытла шутланса тăраççě. Анчах уборка ěçěнче хăшпěр кун 20—30 çын пулмаççě. 3-мěш бригадăра (бригадирě Захарова) тырă вырма 27 çын тухмалла пулсан, кашни кунах 15—20 çын çеç тухать. Çавăн пекех 4-мěш бригадăра та (бригадирě Никитина) 28 çын ěçлеме тухас вырăнне 20—22 çын çеç тухаççě. Колхозра пěрлешсе апатланмалли столовăйпа ачасен яслине те организацилемен. Çавна пула хăшпěр çамрăк ачаллă хěрарăмсем ěçлеме тухмасăр тăраççě.

Колхоза МТС пěр комбайн ярса панă. Анчах вăл ку тараничен те ěçе тытăнман-ха.

Ку колхозра ВКП(б) райкомěн тата райсовет исполкомěн работникěсем те пулкалаççě. Уборка пуçланнăранпа çак колхоза райсовет исполкомěн председателě Антонов юлташ икě хутчен те пырса кайнă. Анчах кун хыççăн та колхозри ěçе лайăхлатас тěлěшпе нимěнле конкретнăй мера та йышăнман.

Малышкин.

Ăмăртса ěçленин результачě

ТĂВАЙ. («Чăваш Коммуни» корр.). Тырпулсене пухса кěртме тухас умěн Ямбулатовăри «Звезда» колхозри отечественнăй вăрçă участникě Анисимов юлташ ертсе пыракан 1-мěш бригада кěрхи тырăсене 8 ěçкунě хушшинче, çурхи тырăсене 7 кунта пухса кěме йышăннă.

— Астăвăр, иккěмěш бригада пур ěçре те малта пырать, çуракинче те мала тухрě. Пирěн уборкăра вěсене хуса çитсе иртсе каяссишěн кěрешмелле,—асăрхаттарнă бригадир колхозницăсене.

Тырă вырма пěр-пěринпе ăмăртакан бригадăсем юнашар тăнă. Малтанхи кунах çур кун хушшинче 2-мěш бригада икě гектар ыраш вырнă. Çак хыпар Анисимов бригадине часах çитнě. Кану вăхăтěнче бригадир колхозниксене иккěмěш бригада мала тухни çинчен пěлтерчě: «Пирěн кирек мěнле пулсан та уборкăра мала тухмалла», тесе чěнчě вăл колхозниксене.

Çакăн хыççăн 1-мěш бригадăри колхозницăсем ытти бригадăсенчен ěçе иртерех тухма тытăнчěç. Ěçрен сěм тěттěм пулсан çеç кěрсе пычěç. А. Евдокимовпа М. Евдокимова машиноведсем кулленех 6—7 гектар тырă вырса пычěç. Ахмедина юлташ кашни кун алăпа 0,30 гектар, А. Гривкова 0,28 гектар тырă вырчěç. Никитинăпа Васильев агитаторсем колхозниксемпе пěрлех кашни кунах уйра пулчěç. Вěсем колхозниксене Сталин юлташăн приказěсене тěплěн ăнлантарса пачěç. Сталин юлташăн приказěпе хавхаланнă колхозниксем пысăк тухăçлăхпа ěçлесе ыраша 7 кунта вырса пěтерчěç, ултă кун хушши тимлěн ěçленě хыççăн çурхи тырăсене те бригада 10-мěшěнче вырса пěтерчě.

Халь колхозăн ытти бригадисем хěрсех çурхи тырăсем выраççě. Анисимов юлташăн бригади иккěмěш бригадăна пулăшать. Çуртырринсене колхоз августăн 14-мěшě тěлне пěтěмěшпех вырса пěтерет. Ыраш кěлтисене 67 гектар синчен турттарса капана хывнă.

В. ВЕСЕЛОВ.

Чăваш АССР Совнаркомěнче

Промысла кооперации артелěсен социализмлă ăмăртăвěн 1943 çулхи июль уйăхěнчи итогěсем

Чăваш АССР Совнаркомě промысла кооперации артелěсен июль уйăхěнчи итогěсене пăхса тухса, Канашри «Авангард» артель (Чăвашпромсоюз системине кěрет), Куславккари «Прогресс» артель (Чăвашшвейпромсоюз системине кěрет), Шупашкар районěнчи Шăнкасри «Правда» артель (Чăвашпромсоюз системине кěрет), Пысăк Шахчуринăри артель (Чăвашдревпромсоюз системине кěрет) мала тухнă тесе йышăннă.

Канашри «Авангард» артель июльти плана пěтěм продукци кăларас тěлěшпе 113,3 процент, ширпотреб енěпе 100,7 процент тултарса, июньринчен ытларах продукци кăларнă. Çакна шута илсе Чăваш АССР Совнаркомěн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне Шупашкарти лесхимартельтен илсе Канашри «Авангард» артеле (правлени председателě Васильев юлташ, горсовет исполком председателě Белоусов юлташ) пама йышăннă тата артельти ăмăртура уйрăмăнах палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкě укçа памалла тунă.

Социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Куславккари «Прогресс» артеле, июль планне пěтěм продукци кăларас тěлěшпе 205,3 процент, ширпотреб енěпе 198,3 процент тултарнăскере, июнь уйăхěпе танлаштарсан продукци кăларассине 73 процент ÿстернěскере—10.000 тенкě; Шупашкар районěнчи Шăнкасри «Правда» артеле (правлени председателě Беличев юлташ, райсовет исполкомěн председателě Миронов юлташ), июльти плана пěтěм продукци кăларас тěлěшпе 238 процент, ширпотреб енěпе 333,4 процент тултарнăскере, июньрипе танлаштарсан продукци кăларассине 18,6 процент ÿстернěскере—5.000 тенкě; Пысăк Шахчуринăри артеле (правлени председателě Ильин юлташ) июльти плана пěтěм продукци кăларас тěлěшпе 281,7 процент, ширпотреб енěпе 389,4 процент тултарнăскере—5.000 тенкě укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомě 1943 çулхи июль уйăхěнче **Чăвашпромсоюз** системине кěрекен Улатăрти «Красная Звезда», «8-ое Марта», Куславкка районěнчи Горький ячěпе тăракан, Сěнтěрвăрринчи «Крестьянский кузнец», Советски районри «Трудовик», Сěнтěр районěнчи Матикассинчи «Кожевник», Елчěк районěнчи Яманчурăри артелсем; **Чăвашдревпромсоюз** системине кěрекен Йěпреç районěнчи «Кооплеспром», Абакассинчи «Социализм», Октябрьски районри Эльбарусовăри, Первомайски районри Сигачинри, Сěнтěр районěнчи «Дружба» артельсемпе Шупашкарти лесхимартель; **Чăвашшвейпромсоюз** системине кěрекен Етěрнери Сталин ячěпе тăракан, Йěпреç районěнчи Буинскри «1-ое Мая» артельсем; **Чăваштарпромсоюз** системине кěрекен Сěнтěр районěнчи Шатракассинчи, Октябрьски районри Вăта Пакăшри, Ишлей районěнчи Мăн Мамăш, Чаганар, Чурачăк, Шайгильдино артелěсем лайăх ěçленине палăртрě.

Укерчěк çинче: Ишлей районěнчи «Коммунист» колхозри малта пыракан 2-мěш бригада кěреплеллě çавасемпе сěлě çулать.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчěкě.

УБОРКА ĚÇĚСЕМ КАЯ ЮЛНĂ

КАНАШ. (Хамăр корр.). «Комбайн» колхозăн кăçал 439 гектар тырпул пухса кěртмелле. Вăл шутран августăн 10-мěшě тěлне 240 гектара яхăн çеç вырса çěмеле хывнă.

Кěреплеллě çавасемпе кунта пěрре те усă курмаççě. Вěсемпе тырă вырма пěр бригадăна та наряд паман. Çавăн пекех жнейкăсемпе те туллин усă курмаççě. Машиновед Т. Трофимов юлташ кунне 9 сехет çеç вырать, ытти çичě сехет жнейка ахалех ларать.

Бригадирсем хушшинче дисциплина çирěп мар. Бригадир П. Семенов правлени панă нарядсене тивěçлěн пурнăçласа пымасть. Унăн бригадинче кунне вуншар колхозник пěр сăлтавсăрах ěçе тухмаççě.

Кěлтесене капана хывнă

ШАМАРША, августăн 13-мěшě. (Телефонпа). «Победа» колхоз кěрхи тата çурхи тырăсене кěске срокра ăнăçлăн пухса кěрсе. 344 гектар çинчен вырса пухнă тырпула колхоз пěтěмпех капана хыврě.

Кěлтесене капана хывас ěçе колхозри агитколлектив ертсе пычě. Агитколлектив руководителě Николаева юлташ çак ěçе пěтěм актива хутшăнтарчě. Кěлтесене лашасемпе те турттарчěç, лучниксемпе те йăтрěç. Кěлте турттарса капана хывас ěçре колхоз çěрлехи вăхăтпа та туллин усă курчě.

Б. ВИСЛОБОКОВ.

Республикăри партактивăн пухăвĕ

Августăн 12—13-мĕшĕсенче республикăри партактивăн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху промышленноçпа транспортăн 1943 çулхи пĕрремĕш çурçулхи ĕçĕсем тата Облаçри парторганизацин задачисем çинчен сÿтсе-яврĕ. Ку ыйтупа пуху ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн И. М. Чарыков юлташăн докладне итлерĕ.

Республикăри промышленность тата транспорт предприятисенчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, служащисем, мухтавлă Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах пулăшса тăрассишĕн тăрăшса, 1942 çулхи хуçалăх задачисене анăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, 1943 çулти малтанхи çурçул хушшинче те çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Çурçулти плана государство промышленноçĕ 103,2 процент, Союз промышленноçĕ 107,5 процент тултарнă. Вырăнти промышленноçпа промкооператци те плана ирттерсе тултарнă. Малтанхи çурçулта производство планне тултарас тĕлĕшпе Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен, Канашри вагонсем юсакан, Улатăрти паровозсем юсакан заводсем, Шупашкарти табак фабрики, Улатăрти махорка фабрики, Вăрмарти спортинвентарь фабрики, Альгешевăри фабрика лайăх ĕçленĕ. Главнăй инженер пулса Якунин юлташ ĕçлекен завод коллективĕ виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тытса тăрать.

Транспорт предприятийĕсем те хăйсен ĕçне лайăхлатнă. Вагонсем тиес тĕлĕшпе çурçулти плана Улатăр станци 113 процент, Канаш станци 115 процент, Шупашкар станци 310 процент тултарнă. Шупашкар тата Улатăр дистанцисем чугунçулсене лайăх пăхса усраççĕ. Госпароходствăн Сăрă çинчи агентстви навигаци пуçланнăранпа август уйăхĕчченхи тапхăрта грузсем тиес плана ирттерсе тултарнă.

Анчах пур предприятисем те хăйсен умĕнче тăракан задачăсене анăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ теме çук-ха. Чĕртаварсем, оборудовани тата ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулнă пулин те, Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн, вырăнти топливо промышленность управленин, коммуналлă хуçалăх, полиграфи управленин предприятийĕсем, Сĕнтĕрвăрринчи тата Етĕрнери спирт завочĕсем, Милютинри механизациленĕ вăрман пункчĕ çурçулти плана тултарман.

Чарыков юлташ тата пренире тухса калакансем промышленность Халăх Комиссариачĕсен предприятийĕсен ĕçĕсене тишкерсе чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕн директорĕ Беляков юлташ партипе совета районсенчи организацийĕсем ФЗО шкулĕсене вĕренме çынсем ярас енĕпе начар ĕçленине чылай фактсемпе çирĕплетсе пачĕ. Предприяти руководителĕсем те шкулсене кирлĕ пек пулăшмаççĕ.

Производствăна поточнăй методпа организацилени ĕç тухăçлăхне ÿстерет. Канашри вагонсем юсакан заводри пĕр цехра поточнăй методпа ĕçлеме тытăнсан, ĕç тухăçлăхĕ 15 процент таран ÿснĕ. Çавăн пекех Шупашкарти пĕр заводра уйрăм детальсем тунă çĕрте поточнăй методпа ĕçлеме тытăннă, кунта ĕç тухăçлăхĕ тăватă хут ÿснĕ, унта ĕçлекенсене чылайĕшне урăх çĕре куçарма май пулнă. Анчах предприятисенче поточнăй метод çине куçас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Предприятисене, промартельсене тата транспорта хĕле хатĕрлес ĕç сÿрĕк пырать. Вутă хатĕрлес, çуртсене, оборудованисене юсас тĕлĕшпе чылай çĕрте паянччен те татăклă мерăсем йышăнман. Главнăй инженер пулса Челноков юлташ ĕçлекен заводăн 110 пин кубометр вутă хатĕрлемелле, ку таранччен пурĕ те 16 пин кубометр кăна хатĕрленĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра çуртйĕрсене юсасси ерипен пырать.

Строительство хăвăртлăхĕсем çителĕксĕр. Строительство организацисенчен чылайĕшĕсем плана уйăхран уйăхах тултараймаççĕ. Шупашкарти электростанци строительствинче оборудованисене вырнаçтарассине вăрăма янă.

Пухура уйрăм предприятисенче партиллĕ-массăллă ĕçе япăх йĕркеленине палăртрĕç. Куславкка комбинатĕнче хăшпĕр цехсенчи парторганизацисем ăмăртăва ертсе пырассинчен пăрăнса тăраççĕ. Çавăнпа унта хăшпĕр цехсенче ăмăрту договорĕсем те туман. Ăмăрту договорĕсене тĕрĕслессине кирлĕ пек организацилемен. Хăшпĕр парторганизацисем оборудованисемпе туллин усă курас, энерги, чĕртавар перекетлес, браксене пĕтерес ĕçсем çине тимлĕн çавăрăнса пăхмаççĕ.

Пренире ВКП(б) Обком секретарĕн оборона промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Крылов, ВКП(б) Улатăр горкомĕн секретарĕ Красильников, Улатăрти паровозсем юсакан заводри цех начальникĕ Моисеева, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Репкин, электростанци строительствин начальникĕ Бородин, ĕç резервĕсен управленийĕн начальникĕ Поляков, ВКП(б) Обком секретарĕн вăрман промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Бобров, Канашри вагонсем юсакан завод начальникĕ Поздняков, стахановец Димитренко тата ытти юлташсем—пурĕ 20 çын тухса каларĕç.

Пуху, Мускаври Ленин орденлĕ „Динамо" завод коллективĕ чĕнсе каланине тата республикăри малта пыракан предприятисен пуçарăвне ырласа, Октябрь уявне çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыма йышăнчĕ.

Пуху Чарыков юлташ докладĕ тăрăх йышăннă резолюцире республикăри промышленность ĕçне малашне те лайăхлатма, иккĕмĕш çурçул планне анăçлăн тултарма кирлĕ татăклă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренеççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра «Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене вĕренес тĕлĕшпе кружок организациленĕ. Унта ялти актив—пурĕ 26 çын вĕренет. Кружока коммунист И. Кузьмин юлташ ертсе пырать. Занятисем ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ çирĕплетнĕ план тăрăх пулса иртеççĕ. Ку таранччен 5 заняти ирттернĕ.

Кружокра вĕренекенсем пурте агитаторсем, коммунистсемпе комсомолецсем. Сталин юлташăн кĕнекине вĕреннипе пĕрлех, вĕсем ялта агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Колхозниксене Сталин юлташăн витĕмлĕ сăмахĕсемпе паллаштараççĕ.

Сталин юлташăн кĕнекине уйрăмăнах М. Зайцева, Петров, Кузьмин юлташсем лайăх вĕренеççĕ. Занятисене йĕркеллĕ çÿреççĕ. Анланман ыйтусене çийĕнчех ыйтса пĕлеççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Ăшă япаласем пухас ĕçе вăйлатмалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 13-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Колхозниксем фронтри çĕнĕ çитĕнÿсемпе хавхаланса, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем хатĕрлес ĕçе вăйлатсах пыраççĕ. Çак кунсенче «Победа» колхоз членĕсем боецсем валли 25 мăшăр перчетке, 22 мăшăр носки, «Новая сила» колхоз членĕсем 48 алшиш, 52 мăшăр носки çыхса хатĕрлерĕç.

Анчах районра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Районĕпе паянхи куна мĕнпурĕ те 193 мăшăр носки, 161 мăшăр перчетке çеç пухса хатĕрленĕ.

Мартынкасси ялсоветĕнче 6 колхоз. Вĕсем пĕри те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем хатĕрлес ĕçе тытăнман. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та пĕр ăшă япала та çыхса хатĕрлемен.

Районра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕç начар пулса пыни коммунистсемпе комсомолецсем, совет тата профсоюз активĕ колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынинчен килет.

Куçса килнĕ çемьесемшĕн тăрăшаççĕ

КУСЛАВККА. Паланкассинчи «Коминтерн» колхозра эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесем чылай. Колхоз правленийĕпе ялсовечĕ вĕсене лайăх условисенче усрама тăрăшаççĕ. Колхоз председателĕ И. Матвеев килĕнче эвакуаци енĕпе килнĕ çемьесем—фронтовик çемьисем пурĕ пилĕк çемье пурăнаççĕ. Пилĕк çемье пĕр канашлăн килĕштерсе пурăнаççĕ. Вĕсемшĕн лайăх условисем туса парассине И. Матвеев хăй çине илнĕ.

Колхозри ытти çемьесем те лайăх условисенче пурăнаççĕ. Çакăн пек тăрăшни çине ответлесе, куçса килнĕ çынсем колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ. Д. Куликова халиччен ялхуçалăх ĕçĕнче ĕçлесе курман. Халь вăл пур ĕçсене те вĕренсе çитрĕ, колхозри чи лайăх стахановецсенчен пĕри шутланать.

М. ИЛЬИН.

Çулпуç приказĕ çĕнĕ çитĕнÿсем тума чĕнет

КАНАШ. Горпромкомбинат коллективĕ (управляющийĕ Шлапак юлташ) икĕ уйăх ĕнтĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăй аллинче тытса тăрать. Июль уйăхĕнчи производство программине вăл 126 процент пурнăçланă. Юлашки вăхăтра кунта çăм, гуталин тата шăл тасатмалли порошок туса кăларас ĕçе пуçарнă. Çак çĕнĕ йышши япаласене туса кăларас ĕçсем те анăçлăн пулса пыраççĕ.

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа Хĕрлĕ Çар воинĕсене панă приказне сÿтсе явнă хыççăн кунта социализмлă ăмăрту çĕнĕ хавхаланупа сарăлса кайрĕ. Тимĕрçĕ Васильев юлташ задание кашни кун 350—400 процент тултарать. Слесарь Барковский юлташ ку уйăхри задание 350 процент тултарма пулчĕ. Çавăн пекех шăвăç цехĕнче ĕçлекенсем Крылов, Дегтярев, Лукин юлташсем те уйăхри задание 300 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕç.

Горпромкомбинат коллективĕ Хĕрлĕ ялава хăйĕн аллинчех тытса тăрассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет. Иккĕмĕш çурçулхи плана вăл кăçалхи ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче пурнăçлама пулчĕ.

— Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказĕ пире çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем тума чĕнет. Эпир хамăр ĕçре Хĕрлĕ Çар фронтра паттăррăн кĕрешнĕ пекех ĕçлĕпĕр,—тет горпромкомбинатăн главнăй инженерĕ Есилевская юлташ.

Ф. М.

Вăрманпромхоз вутă хатĕрлемелли плана тултарчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри вăрманпромхоз, хĕлле вутă хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх ĕçлесе, республикăра иккĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Нумай колхозниксем вăрманта тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем, çуллахи вăхăтра та лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Вăрманпромхозри рабочисем куллен кирлĕ таварсем туса хатĕрлемелли плана та 100 процент ытла пурнăçланă. Вăрманта пĕр талăкра ĕçлекен Иван Трофимов («Свобода» колхозран) планпа 140 кĕреçе тăвас вырăнне 331 кĕреçе, Митрофан Александров («Красный Восток» колхозран)—217 кĕреçе туса хатĕрленĕ. «Новая сила» колхоз членĕ Леонтий Захаров та 80 кубометр вырăнне 114 кубометр вăрман каснă. Çакăн пек ĕçленĕшĕн вăрманпромхоз дирекцийĕ 11 çынна преми пачĕ. Премии илнĕ çынсем татах та лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Районри нумай организацисемпе шкулсем хăйсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеççĕ. Упи, Кушар тата ытти чылай шкулсем хăйсем валли вутă хатĕрлесе çитерчĕç. Шетмĕри, Красноармейскинчи больницăсем, райсоюз хăйсем валли хĕл каçмалăх вутă касрĕç. Шетмĕ больницинче ĕçлекен Е. Пикова, Г. Дергунова юлташсем хăйсен нормисене 200-шер процент тултарса пычĕç.

Анчах та хăшпĕр шкулсем ку тарана çитсе те пĕр кубометр та вутă хатĕрлемен. Тусай, Байсубино, Сурăмкĕрра, Албахтино шкулĕсем çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плансене пурнăçламасăр тăраççĕ.

С. ШАДИН.

Пирĕн авиаци Полтавăпа Красноград чугунçул узелĕсене тапăнни

Августăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци, Полтава чугунçул узелне виççĕмĕш хут тапăнса, тăшманăн унти çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула складсене тата чугунçул çинчи 5 состава вут хыпса илнĕ. 18 тĕлте вăйлă взрыв пулнă. Бомбардировка вĕçленсе пынă вăхăталла пушар чугунçул линийĕ тăрăх сарăлса кайнă та темĕн сарлакĕш вырăнта вăйлă пушар кĕрлесе тăнă.

Красноград чугунçул узелĕнче бомбăсем тăшманăн кунта пухăнса тулнă эшелонĕсем хушшинче çурăла-çурăла кайнă. Пĕр эшелона бомба тÿрремĕнех пырса тивнипе питĕ вăйлă взрыв пулнă. Çав взрыв хыççăн чугунçул узелĕн пĕтĕм территорийĕ çинче пушарсем тухнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Ют çĕршывсенче

Италири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Милан влаçĕсем ытла кирлĕ çар предприятийĕсенче ĕçлемен граждансене пурне те Миланран ытти çĕре куçарма приказ панă.

ЖЕНЕВА, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Римран пĕлтернĕ тăрăх, Италин шалти ĕçсен çĕнĕ министрĕ Риччи хăйĕн ĕçĕсене ĕçлеме тытăннă май префектсене çыру янă. Вăл вĕсене халăха демонстрацисем тума чарма хушнă тата корольпе çĕнĕ влаçа итлесе, пăхăнса тăман «пăлхавçă элементсене» асăрхаса тăма хушнă.

СИЦИЛИ УТРАВĔ ÇИНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Сицилире Англин 8-мĕш арми чаçĕсем Рипосторан 3 миля кăнтăртарахра ларакан Арчирафы хулине çитнĕ, халĕ Джаррене хăратса тăраççĕ. Бронтерен çурçĕртерехре пулса иртнĕ çапăçу хыççăн 8-мĕш арми малалла Малетто патнелле куçса пырать. Англи çарĕсем американецсен Рандаццоран 4 мильăра тăракан 7-мĕш армийĕпе çыхăнса кĕрешеççĕ. Союзниксен çарĕсем Назо хулине йышăнса илнĕ те Назо шывĕ урлă каçнă. Каярахпа шыв хĕрринчи Броно хулине йышăнса илнĕ.

Енер Америкăн çар карапĕсем Сицилин çурçĕр-хĕвелтухăç çыранĕнчи çулсене Марина ди Пати патне çитиччченех пенĕ (çак пункт вăл Мессинăран пĕр 50 километр хĕвеланăçнерехре ларать). Августăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин çар карапĕсем Таорминăри çулсене тата Али сăмсахне вăйлăн пенĕ. Тăшманăн çыранри батарейисем хирĕç пенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен йывăр тата вăтам бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем паян Римри сортировка станцине атакăланă. Алжирти радио çакăн çумне çапла хушса калать: пуринчен ытла Литторио тата Сан-Лоренцо станцийĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă, тет.

Тăшманăн Францири тата Голландири аэродромĕсемпе чугунçулĕсене тата Франци çыранĕ çумĕнчи суднăсене атакăланă.

Çурçĕр Африкăра Виши майлă ĕçлекен çынсен ĕçĕсене йĕрлеме комисси тунă

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан çапла пĕлтерет: Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет августăн 12-мĕшĕнче комисси тунă. Çав комиссин задачи—Çурçĕр Африкăра Виши майлă пулса ĕçлекен тата Германипе «килĕштерсе» ĕçлес политикăшăн тăракан çынсене вырăнтан кăларасси пулса тăрать. Суйланă çынсене, чиновниксене тата общество организацийĕсене, 1940 çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа тăшмана пулăшса тăнисене, пĕрлешÿллĕ нацисен ĕçĕсене кансĕрлесе тăнисене, французсене хирĕç тăнисене, конституциллĕ учрежденисемпе кĕрешнисене, «Виши законĕсене» пурнăçласа пырса пурлăх тĕлĕшĕнчен усă курнисене наказани пама çав комиссие полномочи панă.

ЧЕРЧИЛЛЬ США-на КАЙНИ

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Квебекран пĕлтернĕ тăрăх, унта çакă паллă пулса тăнă: Черчилль Рузвельтпа тĕл пулса калаçма США-на кайнă. Вĕсем пĕр-пĕринпе хăçан тата ăçта тĕл пулса калаçасси паллă мар-ха.

Уйăх тĕттĕмленни

Августăн 15-мĕшĕнче каçхине уйăх тĕттĕмленет. Уйăх Мускаври вăхăтпа 20 сехет те 59 минутăра тĕттĕмленме тытăнать, уйăх тĕттĕмленни чи çурçĕрти тата чи хĕвелтухăçĕнчи çĕрсемсĕр пуçне Совет Союзĕн пĕтĕм территорийĕнче курăнать.

Редакцине килнĕ çыру

Усĕр председатель

Йĕпреç районĕнчи „МОПР" колхоз председателĕ Парфенов юлашки вăхăтра ĕçкĕпе иртĕнсе кайрĕ. Хăй каланă тăрăх, вăл пĕр эрне те урă çÿремест. Çавăнпа та колхозра çитменлĕхсем нумай. Кунсăр пуçне, председатель çар çыннисен çемьисем çине чунсăрла пăхать. Уйри тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра столовăй уçман пирки, колхозниксене кăнтăрла çакăр пама пулнăччĕ. Анчах çичĕ ачаллă фронтовик арăмĕ Гордеева çăкăр ыйтма пырсан, ăна вăрçса кÿрентерсе кăларса янă. Парфенова колхоз пурлăхне ĕçсе салатма чармалла.

Л. Вишнев.

Трофейăсен выставки

Çак çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа Мускавра трофейăсен выставки ĕçлеме тытăнчĕ.

Выставкăна халь кашни кунах темиçе çĕршер çын кĕрсе курать. Кашни экскурсант, Хĕрлĕ Çар тытса илнĕ хĕçпăшалсен нумай йышлă тата тĕрлĕ экспоначĕсене курса, фашистла Германи çак вăрă-хурахла юнлă вăрçа епле тимлĕн хатĕрленнине тата вăл Францие, Чехословакие, Бельгие, ытти çĕршывсене хăйĕн кашкăрла тискер чуралăхне мĕнле майпа кĕртсе ÿкернине, унăн вăрă-хурахла тĕллевĕсене тарăннăн тавçăрса илет, нимĕç фашисчĕсене, лăпкă пурăнакан Совет çĕршывĕ çине тискеррĕн килсе тапăннăскерсене, чĕререн тарăхса ылханать.

Çакăнпа пĕрлех кунта совет халăхĕн нимĕççене хирĕç виççĕмĕш çул пыракан йывăр кĕрешĕвне, мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн паттăрла хăватне, унăн халиччен этем шухăшламан тĕлĕнмелле вăйсем пуррине, совет изобретателĕсемпе конструкторĕсен пысăк талантне, пирĕн правительствăн, Сталин юлташăн аслă тавракурăмĕпе сисĕмлĕхне, рабочисемпе работницăсен, колхозниксемпе колхозницăсен пархатарлă ĕçне яруççăн куратăн.

Выставкăра мĕн кăна çук? Кунта Германин йывăр танкĕсен юлашки тĕслĕхĕсенчен пуçласа, вĕсем вырăс хĕлĕн шартлама сиввинчен çăлăнас шутпа çĕленĕ хут кальсона çитиччен,—пĕтĕмпех куç умĕнче. Фашистла Германи çак юлашки çулсенче хăйĕн вассальнăй тата оккупациленĕ çĕршывсене ирĕксĕрлесе çаратнă хĕçпăшалсем тата пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хĕссе пынине пула пăрахса е çухатса хăварнă çар техникин экспоначĕсем совет халăхĕ çак иртнĕ икĕ çул хушшинче туса ирттернĕ çĕнтерÿсен вăйне кăтартса параççĕ.

Выставка панорами виçĕ тĕп пая уйăрăлать: площадь варринче — авиаци паркĕ, сулахайра—танксем, сылтăмра—«артиллери аллейи».

Авиаци паркĕ. Нимĕç бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем, штурмовикĕсемпе пикировщикĕсем хăйсен çунаттисене халь кăна тытнă çăхансем пек сарса лараççĕ. Вĕсен сивĕ сăнлă, нĕрттем кÿлеписене курсан, ирĕксĕрех Одесса, Севастополь, Ленинград, Сталинград хулисем, аслă Украинăпа Белоруссин чечеклĕ ялĕсем аса килеççĕ. Совет çĕршывĕн темиçе çĕр хулисемпе ялĕсем пушарпа хыпса çунни тата бомба тĕпренчĕкĕсем айĕнче пĕр айăпсăр ача-пăчасемпе хĕрарăмсем юн юхтарса вилнине аса илтерекен хăрушă картинăсем куç умне тухса тăраççĕ.

Акă тăватă моторлă пысăк бомбардировщик. Унăн ячĕ—«Фокке Вульф—200». Ăна нимĕçсенчен Сталинград патĕнче тытса илнĕ. Унпа юнашар—штурмовик «Хейншель — 129», пикировщик «Юнкерс — 87», разведчик «ВФ—189», «Ю — 52», «Аист—156», «Бюккер—131», «Мессершмитт» т. ыт. те. Кĕскен каласан, фашистла Германин хура вилĕм кÿме тунă çар машинисем—тискер кайăк карти—пĕтĕмĕшпех куç умĕнче.

Вĕсем çинчи кашни «суран» пирĕн летчик-истребительсемпе зенитчиксен пысăк ăсталăхне, хăюлăхне, вĕсем темĕн чухлĕ чее тăшмана та çĕнтерме пултарнине кăтартса парать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăрçăн иртнĕ икĕ çулĕ хушшинче нимĕçсем 43.000 самолет çухатса хăварчĕç.

Акă танксем. Вĕсем çине пăхатăн та—пуçра ирĕксĕрех юмахри пек тарăн лачакари çĕлен кĕтĕвĕпе калта йышне кăтартакан хăрушă картина çуралать. Калама çук хăрушла! Кунта нимĕçсен «Т—I», «Т—II» маркăллă çăмăл танкĕсемпе «Т—III» маркăллă вăтам танкĕсем, «Т—IV» маркăллă йывăр танкĕсем, французсен «Рено», «Сомуа» типлă танкĕсем, итальянецсен «СПА»—маркăллă танкĕ, чехословаксен «38» маркăллă танкĕ венгерсен тăхăр тонналлă танкĕ тата ытти те.

Акă «Т—II» маркăллă çăмăл танк. Унăн йывăрăшĕ 9 тонна. Ун çинче—пĕр пĕчĕк калибрлă тупă, тепĕр пулемет. Кун йышши танксем вăрçăн малтанхи кунĕсенче Германи çарĕнче тĕп вырăн йышăнса тăнă. Фашистсем çакăн йышши танксен вăйĕпе Европăри нумай çĕршывсен çимĕçлĕ уйхирĕсене тискеррĕн таптанă. Совет Союзне хирĕç вăрçăпа тухас умĕн Германин бронетанковăй вăйĕнче кун йышши танксем 40 процента яхăн шутланнă.

«Т—III» маркăллă танк 22 тонна туртать. Ун çинче—пĕр 50 миллиметрлă тупă, икĕ 7,92 миллиметрлă пулемет. Çиелтен ăна çирĕп броньăпа витнĕ. Калас пулать: нимĕçсем Совет Союзĕ çине тапăннă чухне пуринчен ытла çакăн йышши танксен вăйĕ çине ытларах шаннă.

«Т—IV» маркăллă танксене вĕсем пирĕн çине тапăнас умĕн çеç туса кăларнă. Кун йышши танк 60 тонна туртать, нимĕçсем ăна «тигр» тесе ят панă. Ун çинче—пĕр 75 миллиметрлă тупă.

Нимĕçсен танк паркĕ çак вăрçăн малтанхи кунĕсенче çăмăлттай нимĕçсене чылаях савăнтарма пултарнă. Анчах вăхăт хăйĕн ĕçне турĕ. Нимĕçсен шăпи тулса çитрĕ: пирĕн куллен ÿссе пыракан хĕçпăшаллă вăйсем нимĕç çарĕн хура вăйне пĕрин хыççăн тепĕрне лучăркаса тăкма пуçларĕç. Хĕрлĕ Çарăн «КВ» тата «Т—34» маркăллă танкĕсем нимĕçсен «тигрĕсене» паттăррăн çĕмĕрме тытăнчĕç. Пирĕн артиллерин хаяр снарячĕсем нимĕç танкĕсене вуншарăн кăна мар, темиçе çĕршерĕн, пиншерĕн пере-пере аркатма пултарчĕç. Вăрçăн иртнĕ икĕ çулĕ хушшинче нимĕçсем 42.000 танк çухатнă.

Выставкăн «артиллери аллейине» кĕрсен, санăн умма пушар хыççăнхи пек е хăрăк вăрман евĕр картина тухса тăрать. Малтанах кунта 20 миллиметрлă противотанковăй орудисен çĕнĕ тата кивĕ тĕслĕхĕсене куратăн. Вĕсем патĕнче хисепсĕр йышлă вĕтĕ снарядсем купи-купипе выртаççĕ.

Малалла утнăçемĕн орудисен калибрĕ пысăкланса пырать. Куракансен умне 37 миллиметрлă, 47 миллиметрлă, 75 миллиметрлă противотанковăй тупăсем, тĕрлĕ системăллă кĕске кĕпçеллĕ орудисем, ултă кĕпçеллĕ миномётсем, кивĕ конструкциллĕ 105 миллиметрлă тата 150 миллиметрлă гаубицăсем, 210 миллиметрлă орудисем,—кĕскен каласан нимĕçсен артиллери хĕçпăшалĕн тĕрлĕ тĕслĕхĕсем тухса тăраççĕ.

Акă 210 миллиметрлă орудисем. Нимĕçсем вĕсенчен пирĕн столицăна—Хĕрлĕ Мускава персе амантма хатĕрленнĕ пулнă. Анчах çак тискер сăнлă орудисем хăйсен асавлă çăварĕсене карма ĕлкĕреймен. Вĕсем Мускав çывăхĕнчи тарăн юр çине ахалех ларса юлнă, вĕсен расчечĕсем хăшпĕрисем хĕвеланăçнелле тарнă, хăшĕсем вилсе юлнă.

Çак мĕнпур йышши хĕçпăшалсен вăйне пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар хамăрăн хаяр хĕçпăшалпа, вăл шутра мухтавлă «Катюшăн» çиçĕм-аслатиллĕ тĕлĕнмелле вăйĕпе пусарса лартать. Совет халăхĕ, унăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ нимĕç бандичĕсене хирĕç пушă алăпа çапăçмасть. Совет халăхĕн хăйĕн тăшманне пĕтерсе тăкмалли хаяр хĕçпăшал сахал мар. Çителĕклех!

Куракансене стрелковăй тата авиаци хĕçпăшалĕсем те хытă интереслентереççĕ. Кунта тăшман пехотин боевой хĕçпăшалĕн пĕтĕм комплектне—револьвертан пуçласа полк миномётне çитиччченех кăтартнă.

Выставкăра нимĕç çарĕн транспорчĕ те куç умĕнчех. «Мерседес», «Оппель», «Шкода» маркăллă автомобильсемпе грузовиксем, урапаллă, гусеничнăй транспортерсем йĕркипе лараççĕ. Вĕсем хушшинче французсен «Рено» маркăллă, итальянецсен «Фиат» маркăллă машинисем те пур.

Тĕлĕнмелле тата кулăшла экспонатсем пур кунта. Акă нимĕç машинисемпе юнашар румынсен тăватă кустăркăчлă урапи ларать. Нимĕçсем ăна пирĕн хĕвеллĕ Кубань хирне сĕтĕрсе пынă пулнă. Кунтах тата нимĕçсен «Мерседес-Бенц» ятлă машини тăрать. Катаран вăл броньăран тунă пек курăнать. Анчах ку куçа улталакан япала кăна! Нимĕçсем хăйсене хăйсем улталанă. Машина çывăхне пырсан пĕтĕмпех урăхла: унăн айăккисене пресланă картонран хытарса тунă, машина ăшĕнчи пÿлĕмсем—фанер хăминчен.

Выставкăри экспонатсене курсан çакна каламалла: ку выставка—Хĕрлĕ Çарăн отечественнăй аслă вăрçăри трофейисен каталогĕ кăна. Ку каталогăн историллĕ страницисем татах пысăк событисемпе, пысăк трофейăсен списокĕсемпе пуянланмалла.

Выставкăри экспонатсене пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕç войскисене хирĕç пыракан вăрçă çулăмĕнче çĕнсе илнĕ. Кашни экспонат çинчех совет воинĕсен паттăрлăхне тата пирĕн боевой хĕçпăшалăн хăватне кăтартакан паллăсем юлнă. Вăл паллăсем тăрăх эпир хамăрăн боецсемпе командирсен çапăçури мастерлăхне, çĕнтерÿ сехетне çывхартакан хамăр техникăн хăватне куратпăр.

Лейтенант Мих. ЮРЬЕВ.

МУСКАВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1802

Типография №1 Управления полиграф, промышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.